Налук тӳлессин ыйтăвĕсемпе

# Бюджет тулли пултăр тесен

Кăçалхи 9 уйăхра Муркаш районĕпе бюджета бюджетпа çыхăнман фондсене налук тӳлевĕсем 102284 пин тенкĕ пырса кĕнĕ. Ку вăл, иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, 111,2 процентпа танлашать. Налук тӳлевĕсем федераллă бюджета 7422 пин тенкĕ (63,2 процент), республика бюджетне 30519 пин тенкĕ (126,5 процент), вырăнти бюджета 17916 пин тенкĕ (121,9 процент), бюджетпа çыхăнман фондсене 46427 пин тенкĕ (112 процент) куçнă.

Вырăнти бюджета куçнă пĕтĕм налук сумминче уйрăм çынсенчен илекен налук шайĕ ытларах вырăн йышăнать. Иртнĕ 9 уйăхра вăл 11083 пин тенкĕпе (61,9 процент) танлашрĕ. Кунпа пĕрлех пурлăхран илекен налук 562 пин тенкĕпе (3,1 процент), çĕр налукĕ 724 пин тенкĕпе (4 процент), тупăшран илекен пĕрлехи налук 4755 пин тенкĕпе (26,5 процент) танлашрĕ.

Çулталăк пуçланнăранпа налук тӳлессипе унчченхи парăмсене тӳлесе татасси 304 пин тенкĕ чухлĕ чакрĕ. Халĕ вăл пĕтĕмпе 3011 пин тенкĕпе танлашать. Кунта çавна та палăртса хăвармалла. Пĕтĕмĕшле налук парăмĕсем чакрĕç пулин те, вырăнти налуксем енĕпе парăмсем 78 пин тенкĕ чухлĕ ӳсрĕç, çапла вара 612 пин тенкĕпе танлашрĕç.

Налуксем тӳлессипе пысăк парăмлă предприятисем тĕлĕшпе 2006 çулта панкрута тухнин процедурине пуçланă. Кунта районти 6 предприятие асăнмалла. Кусем вĕсем «Нива» ял хуçалăх производство кооперативĕ тата «Стройсервис», «Аист», «Блок», «Газстрой», «ВАЮВ» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем.

Налуксене хăй вăхăтĕнче тата йĕркеллĕ тӳлесе тăман организацисене те асăнса хăвармалла. Кун йышшисем сахал мар. Вĕсем шутне «Лазурный» патшалăх унитарлă предприятийĕ, «Спецмонтажгазăн» 3-мĕш номерлĕ тресчĕ» хупă акционер обществи, «Полесье» КСТ, Муркаш почтампчĕ, Муркаш вăрман хуçалăхĕ, «Хмель» компани» хупă акционер обществин Муркашри филиалĕ, «Моргаушагропромснаб» муниципаллă унитарлă предприяти, «Пельмени» кафе» муниципаллă унитарлă предприяти, «Моргаушагропромхими», «5-мĕш номерлĕ трест», «Агроинвестсервис», «Агроном», «Дружба» агрофирма», «Лидер» агрофирма», «Хлебороб» агрофирма», «Дубрава», «Золотая пирамида», «Милград», «Моргаушкорм», «Нежность», «Трасса М-7», «Чăваш сăри», «Юнга» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем, «Просвещенец» СНТ, «Восток», «Чемеево», «Динамо», Чкалов яч. хис., К. Иванов яч. хис., Ленин яч. хис., Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕсем, ачасене туберкулезран сиплекен Каршлăхри санатори, Мăн Сĕнтĕр, Калайкасси, Москакасси, Оринин, Тойкилтĕ, Шетмĕпуç, Шомик, Йӳçкасси шкулĕсем кĕреççĕ.

Харпăр хăй ĕçĕпе ĕçлекен уйрăм предпринимательсемпе организацисем, енчен те вĕсем 2007 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ансат майпа налук тӳлемелли йĕрке çине куçма кăмăл тăваççĕ пулсан, октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ноябрĕн 30-мĕшĕччен çавна валли заявлени çырса пама тивĕç. Налук хумалли объект шутне тупăшсене е тупăшсене тăкакăн виçи чухлĕ пĕчĕклетнĕ виçене кĕртме пултараççĕ. Налук хумалли объекта налук тӳлекен хăй палăртать.

Çавна каласа хăварни те вырăнлă. Налук хумалли объекта налук тӳлекен ансат майпа налук тӳлеме тытăннăран пуçласа виçĕ çул хушши улăштарма пултараймасть. Ансат майпа 2004 çултан вара налук тӳлекенсем 2007 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса налук хумалли объекта улăштарма пултараççĕ. Паллă ĕнтĕ, 2006 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕсем ун пирки налук органĕсене пĕлтерме тивĕç. Енчен те вара ансат майпа налук тӳлекен 2007 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса налук тытмалли урăх мелпе усă курма тытăнасшăн пулсан, унăн 2007 çулхи январĕн 15-мĕшĕччен ун пирки налук органне пĕлтермелле.

Налук тӳлемелли ансат майпа усă курни налук тӳлекенсене организацисен тупăшĕ, пурлăхĕ, пĕрлехи социаллă налук, хушма хак çине хуракан налук, уйрăм çынсен тупăшĕ çине хуракан налук (предпринимательство ĕçĕ-хĕлĕпе тунă тупăш), уйрăм çынсен пурлăхĕ çине хуракан налук (предпринимательство ĕçĕ-хĕлĕ валли усă куракан пурлăх) тӳлессинчен хăтарать. Налук тӳлемелли ансат майпа усă куракан организацисемпе уйрăм предпринимательсем обязательнăй пенси страхованийĕн страховани взносĕсене Раççей Федерацийĕн законодательствипе килĕшӳллĕн тӳлесе тăраççĕ. Ку налука тӳлесе тăрассипе отчетлă тапхăрсем шутне календарлă çулталăкăн пĕрремĕш кварталĕ, çур çул тата тăхăр уйăх кĕреççĕ, налук тапхăрĕ шутне календарлă çулталăк кĕрет.

Федераллă службӑн Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕ налук тӳлекенсене «Электронлă Раççей» федераллă тĕллевлĕ программăна пурнăçа кĕртме тата Раççей Федерацийĕн Налук кодексĕн 80-мĕш статйин 2-мĕш пунктĕнче палăртнă правăпа усă курма чĕнсе калать. Кунта налук органĕсене отчетсене çыхăнăвăн телекоммуникаци каналĕсемпе тăратасси пирки сăмах пырать. Хальхи вăхăтра налук тӳлекенсем отчетсем пама налук инспекцийĕнче тăрса сахал мар вăхăт ирттереççĕ. Çав вăхăтрах вара çак черетсенчен хăтăлма май паракан «эмел» – отчетсене налук органĕсене офисран тухмасăрах, Интернет урлă тăратма май пур. Интернет – налук тата бухгалтери отчечĕсене тăратмалли ансат та хăвăрт мел. Вăл паянхи пурнăçра анлăрах та анлăрах сарăлса пырать. Паян вăл налук тӳлекенсемшĕн те, налук органĕсемшĕн те отчетсем памалли тата йышăнмалли питĕ юрăхлă мел пулса тăрать.

Кунта çак мелпе усă курни мĕншĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни пирки те асăнса хăварни кирлĕ пулĕ.

Пĕрремĕшĕнчен, ĕç вăхăчĕ перекетленет. Налук тӳлекенсен налук инспекцийĕсене çӳремелле пулмасть. Пĕтĕм информацие налук тӳлекенĕн офисĕнчен кирек хăш вăхăтра та ярса пама май пур.

Иккĕмĕшĕнчен, пĕр ĕçе икĕ хут тăвассинчен хăтăлма май пур. Бухгалтери тата налук отчечен документчĕсене телекоммуникаци каналĕсем тăрăх электронлă майпа тăратнă хыççăн вĕсене хут çине пичетлесе илсе пыма кирлĕ мар.

Виççĕмĕшĕнчен, отчетсене электронлă вариантпа тăратнă чух стандартлă вариантпа усă курнă май отчетлăх формисен тĕрĕслĕхне палăртма май пур.

Тăваттăмĕшĕнчен, информацисене электронлă вариантпа тăратнă май форматсене çĕнетмелли оперативлă майсемпе усă курма май пур. Енчен те налук декларацийĕсене, бухгалтери отчечĕсене тата ытти документсене тăратассипе улшăнусем пулсан, налук тӳлекен вĕсем пирки палăртнă вăхăтченех пĕлме пултарать, форматсен çĕнĕ версийĕсене электронлă майпа илет.

Пиллĕкмĕшĕнчен, информаци выписки илме пулать. Налук тӳлекен телекоммуникаци каналĕсемпе информацие налук органне ярса панă май тĕрлĕ шайри бюджетсем умĕнчи тивĕçе епле пурнăçлани пирки выписка илме пултарать.

Улттăмĕшĕнчен, налук тӳлекенĕн электронлă почта урлă налук органĕсенчен тĕрлĕрен информацисем илме май пур. Кусем вĕсем налук законодательствинчи улшăнусем, бюджет счечĕсем, нормативлă актсем улшăннисем т. ыт. те.

Çиччĕмĕшĕнчен, отчета йышăннине çирĕплетесе пани. Налук органне информаци янă хыççăн налук тӳлекене кун пирки çирĕплетсе параççĕ. Тавлашуллă самантсенче ку вăл юридици вăйĕнче шутланать.

Саккăрмĕшĕнчен, вăрттăнлăх. Налукпа бухгалтери отчечен документчĕсене электронлă майпа телекоммуникаци каналĕсемпе ярса пани информаци вăрттăнлăхне тивĕçтерме майсем туса парать.

Тăххăрмĕшĕнчен, информацисене анализ тăвассин оперативлăхĕ тата техникăлла йăнăшсем пулассинчен хăтăлни. Инспекцие электронлă майпа ярса панă отчет материалĕ тĕрĕслев витĕр тухать, лицевой счетсем тăрăх саланать.

Çапла вара çавна палăртасшăн. 2006 çулхи октябрĕн 19-мĕшĕ тĕлне налук тӳлекенсенчен 170-шĕ отчетсене телекоммуникаци каналĕсемпе тăрататать. Хăйсен вăхăтне перекетлес текенсен пурин те налук тата бухгалтери отчечĕсен документчĕсене электронлă майпа Интернет сечĕ урлă тăратма ятарлă çыхăну операторĕн специалисчĕпе килĕшӳ тумалла. Килĕшӳ тума çак ятарлă çыхăну операторĕсем патне пыма пулать:

– «Эталон» аудитор компанийĕ (Шупашкар хули, Мускав проспекчĕ, 17-мĕш çурт, 1-мĕш хуралтă, тел.: (8352)45-00-55; 45-55-75.

– «Инфанет» хупă акционер обществи (Шупашкар хули, Ярославская урам, 17-мĕш çурт, тел.: (8352) 42—70-07; 62-77-74; факс: (8352) 62-44-18.

– «Интернет Центр» чикĕллĕ яваплăхлă общество (Шупашкар хули, К. Маркс урамĕ, 19-мĕш çурт, тел.: 62-48-24; 62-37-55.

– «Удостоверяющий центр» хупă акционер обществи (Шупашкар хули, Мускав проспекчĕ, 38-мĕш çурт, тел.: 42-87-75.

– «Ярослав» чикĕллĕ яваплăхлă общество (Етĕрне хули, 50 лет Октября урам, 71 «г» çурт, тел.: 23-0-73.

**Е. АРСЕНТЬЕВА,**
**Раççей Федераллă налук службин Чăваш Республики тăрăх районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕн налук тӳлекенсемпе, вĕсене регистраци тăвассипе тата учета илессипе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ.**


Сбербанк предлагает

Основан в 1841 году
СБЕРБАНК РОССИИ
ВОЛГО-ВЯТСКИЙ БАНК




## Не покупай, что можешь
## Купи, что хочешь!
## АВТОКРЕДИТ

**Преимущества автокредита Сбербанка России**

— Кредит предоставляется на приобретение нового или подержанного автомобиля иностранного или отечественного производства.

— Кредит может предоставляться на покупку нескольких транспортных средств.

— Кредит выдается на приобретение как автомобильного, так и водного транспорта (яхт, катеров, лодок).

— Кредит может предоставляться без первоначального взноса.

— Кредит может предоставляться с применением системы Irade-in: в качестве собственных средств заемщика принимается оценочная стоимость его старого автомобиля.

— Клиент может приобрести автомобиль в любом автосалоне.

— Обеспечением по кредиту является залог транспортного средства.

— Сумма кредита может быть увеличена с учетом доходов супруги или супруга заемщика.

— Комиссия за досрочное погашение кредита не взимается.

— Банк может принять решение о выдаче кредита и в случае, если у клиента нет договора купли-продажи или платежных документов, что дает возможность клиенту выбрать автомобиль и дилера уже после рассмотрения кредитной заявки. Решение банка действительно в течение 3 месяцев. Зто условие оптимально для клиентов, которые находятся в очереди на приобретение автомобиля.

**Процентная ставка**

**На срок до 1,5 лет** — от 11,5%* до 12%** в рублях
— от 12%* до 12,5%** в долларах США или евро

**На срок от 1,5 до 3 лет** — от 12%* до 12,5%** в рублях
— от 12,5%* до 13%** в доллах США или евро

**На срок от 3 до 5 лет** — от 13%* до 13,5%** в рублях
— от 13,5%* до 14%** в доллах США или евро

(*) **для новых автомобилей**
**(**)** для подержанных автомобилей

**Сумма кредита**

Сумма кредита может составлять до 100% стоимости автомобиля, включая стоимость дополнительного оборудования.

**Обеспечение по кредиту**

— Залог приобретаемого транспортного средства.

— Поручительство супруги или супруга заемщика без учета его платежеспособности (при условии, что заемщик состоит в браке).

**Необходимые документы**

— Заявление-анкета на бланке банка.

— Справка о доходах за последние 6 месяцев.

Клиент может предоставить справку о доходах за последние 4 месяца, если стаж работы на последнем месте составляет менее 6 месяцев при непрерывном стаже работы не менее 8 месяцев (дополнительно представляется выписка из трудовой книжки). В случае, если заемщик в течение последних 4 месяцев принят на новое место работы в порядке перевода, клиент предоставляет справки по форме 2-НДФЛ с настоящего и предыдущего места работы, а также выписку из трудовой книжки.

— Договор купли-продажи и/или платежные документы, подтверждающие цену транспортного средства.

— Паспорт гражданина РФ клиента и супруга или супруги (при условии, что заемщик состоит в браке).

**Срок рассмотрения кредитной заявки.**

До 5 рабочих дней с момента полного предоставления документов. Заявки клиентов, бравших ранее кредит в Сбербанке России, рассматриваются в течение 2 дней.

**7 простых шагов для получения автокредита.**

1. В автосалоне или в банке заемщик получает консультацию по автокредиту и перечень документов, необходимых для рассмотрения заявки в банке.

С собранным пакетом документов заемщик обращается в банк для получения кредита.

2. После рассмотрения документов банк принимает решение по заявке заемщика, о котором банк сообщает заемщику по телефону и предлагает забрать письмо-извещение, подтверждающее одобрение заявки. Данное письмо предоставляется в автосалон для оформления договора купли-продажи и/или платежных документов.

Клиент может получить письмо как в банке, так и по почте или факсу.

3. Заемщик заключает с дилером договор купли-продажи автомобиля и передает его банку. Исходя из условий данного договора банк определяет окончательную сумму кредита.

4. Заемщик заключает с банком кредитный договор и договор залога автомобиля.

5. После получения дилером полной стоимости автомобиля заемщик получает в автосалоне автомобиль и регистрационные документы.

6. В течение 10 рабочих дней с даты выдачи кредита заемщик регистрирует транспортное средство и предоставляет в банк свидетельство о регистрации и паспорт транспортного средства.

7. Заемщик заключает с одной из аккредитованных банком страховых компаний договор страхования от рисков утраты, угона и ущерба на полную стоимость автомобиля и передает в банк страховой полис или договор страхования и трехстороннее соглашение о порядке работы со страховым возмещением между заемщиком, банком и страховой компанией. Список страховых компаний можно уточнить у кредитного инспектора.

**Куда обратиться за консультацией**

Получить консультацию по автокредитованию можно в Моргаушском отделении №7034 Сбербанка России, находящемся по адресу:

Чувашская Республика, Моргаушский район, ул. Ленина, д.34,

контактный телефон отдела кредитования: (8-241) 2-23-46.

Генеральная лицензия Банка России на осуществление банковских операций №1481 от 03.10.2002.

**www.vvb.sbrf.ru**